**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн**
**хисеплĕ депутачĕсем тата чĕннĕ хăнасем!**
**Чăваш Енĕн хисеплĕ çыннисем!**

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн çулленхи Çырăвĕпе паллаштарнă май патшалăх тата муниципалитет влаçĕн мĕнпур сыппин тĕп çул-йĕрĕсене пĕлтерме ирĕк парсамăр. Пирĕн пĕрлехи ĕçĕмĕрĕн тĕп тĕллевĕ – Чăваш Ен çыннисен ырлăх-пурлăхне тата пурнăç шайĕпе пахалăхне лайăхлатасси.

Асăннă кăтартусем республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн йышлă тĕллевĕсене пурнăçланин тĕп пĕтĕмлетĕвĕ пулса тăраççĕ.

Эпир сирĕнпе пурнăçламалли тĕп индикаторсене çĕршыв Президенчĕн Владимир Владимирович Путинăн йышăнăвĕсенче палăртнă. Вĕсене наци проекчĕсене тĕпе хурса туса хатĕрленĕ тата çав проектсем йĕркеллĕн пурнăçланаççĕ, эпир те сирĕнпе вĕсене Чăваш Ен территорийĕнче пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлетпĕр.

Тĕрлĕ программăсене çыхăнуллă тăвас, вĕсенче палăртнă мероприятисен пысăк тухăçлăхне тивĕçтерес тĕллевпе пĕлтĕр эпир республикăна аталантармалли пилĕк çуллăх программăна анлăн сӳтсе явса йышăнтăмăр. Ун никĕсĕ çинче республикăн 2035 çулчченхи аталанăвĕн Стратегине туса хатĕрлерĕмĕр тата ăна Чăваш Республикин саккунĕпе çирĕплетрĕмĕр. Çавна май эпир çĕнĕ çула халăхпа анлăн сӳтсе явса туса хатĕрленĕ ĕçсен уçăмлă планĕпе пуçлатпăр теме пулать.

«Халăх вĕрсен – çил кăларать», – палăртать ваттисен сăмахĕ. Вăл Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене тунă çынсен чун хаваллăхне туллин уçса парать. Ку çула республикăра пирĕн асатте-асаннесен, кукаçи-кукамайсен ĕçри паттăрлăхне халалланă.

Çав йывăр та хăрушă вăхăтра хĕрарăмсемпе çамрăк ачасем чун хавалĕпе кăмăл çирĕплĕхĕн иксĕлми вăйне кăтартса патшалăхăн пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕллевне татса пама пултарнă, вĕсем 380 çухрăм тăршшĕ хӳтĕлев чиккисем тунă. Эпир те, çав хăюллă çынсен тăхăмĕсем пулнă май, çавăн пек пахалăхсемпе палăрса тăратпăр. Апла пулсан, пурне те тума вăй çитеретпĕр.

Çӳлерех асăннă сăмахсен тĕрĕслĕхне иртнĕ çулхи пулăмсем çирĕплетсе параççĕ. Пирĕн пурнăçа кĕтмен çĕртен килсе кĕнĕ хăрушă чир Чăваш Енре пурăнакансемшĕн çирĕп тĕрĕслĕх пулса тăчĕ. Тухтăрсемпе медсестрасем тата сывлăх сыхлавĕн ытти ĕçченĕсем пандемипе ырми-канми кĕрешрĕç. Пĕрисем хĕрлĕ зонăсенче талăкĕпех дежурствăра тăчĕç пулсан, теприсем сывлăх сыхлав отраслĕн пĕтĕм тытăмне çĕнĕлле йĕркелессипе çыхăннă йывăрлăхсене тивĕçлипе чăтса ирттерчĕç.

Ансат пĕр тĕслĕх – васкавлă пулăшу службине пулăшу ыйтса шăнкăравланисен шучĕ, «ахаль» вăхăтрипе танлаштарсан, 5 хут ӳснĕ!

Шел пулин те, вилекенсем те пулчĕç. Кашни вилĕм пирĕншĕн пысăк çухату. Çав хушăрах ку е вăл сферăри ĕç-хĕле тарăннăн тишкерме хистекен сăлтав та çакă. Хăш-пĕр цифрăсене илсе пăхсан, пĕлтĕр вилнисен шучĕ 3484 çынпа танлашнă. Вĕсенчен 45 процентĕ – çĕнĕ коронавирус инфекцийĕн чирĕпе е унпа çыхăннă чирпе чирленисем.

Çапах та! Тулашри сăлтавсене пула вилекенсен шучĕ ӳсни те сисчĕвлентерет. Ытларах чухне çакă асăрханусăрлăхпа çыхăннă.

Çул çинчи транспорт инкекĕ, çӳллĕ вырăнтан ӳкни, чӳречерен тухса ӳкни, килти инкеклĕ тĕслĕхсем – çавнашкал синкерлĕ сăлтавсене пула кăна 1700 ытла çын пурнăçĕ татăлнă!

Эрехпе наркăмăшланнипе вилекенсен шучĕ 80% ӳснĕ!

Асăннă дăннăйсене тĕпе хурса, Чăваш Ен Сывлăх сыхлав министерстви тулашри сăлтавсенчен вилессине чакарма пулăшакан мероприятисен комплекслă планне туса хатĕрленĕ тата ăна Раççей Сывлăх сыхлав министерствипе килĕшӳллĕ тунă. Çапах та çакăн пек вилĕм сăлтавĕсене тĕплĕн тишкерсе ведомствăсен хушшинче çыхăнса ĕçлессине лайăхлатма пулăшакан улшăнусене васкавлăн кĕртни пĕлтерĕшлĕ.

Çапла, инфекци чирĕ сарăлнă вăхăтра чылайăшне çухатрăмăр. Анчах нумайăшне сыватрăмăр та. Иртнĕ çул больницăсене COVID-19 чирĕнчен сипленме пынă 17 711 пациент сывалнă. Хальлĕхе пилĕк пине яхăн çынна врачсем асăрхаса тăраççĕ, кунсерен çĕршер ытла çын сывалса хăнăхнă пурнăç йĕрки патне таврăнать.

Эпир шурă халатлă çынсене хăйсен пархатарлă ĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн чунтан çине-çине тав тăватпăр. Атьăр, хисеплĕ ĕçтешсем, çакна тепĕр хут алă çупса палăртар.

Инкек пире пĕрлештерчĕ, сывлăх сыхлавĕн отраслĕпе ытти пулăшу кĕтекенсене пĕтĕм общество пулăшрĕ: сывлăх хуралçисене тӳлевсĕр апатлантарни, таксипе укçасăр илсе çӳрени, республикăри тĕрлĕ организаципе волонтерсем витĕмлĕ пулăшни. Çаксем тата пациентсемпе республикăра пурăнакансенчен илтекен тав сăмахĕсем тата ырă сунса каланисем вĕсене вăй-хал тата тӳсĕмлĕх кӳреççĕ.

Эпĕ Чăваш Енре пурăнакан кашни çыннах пулăшушăн тата хальхи ларутăрăва тĕрĕс ăнланнăшăн тав тăватăп.

<u>Хисеплĕ ĕçтешсем!</u>

Пирĕн сывлăх сыхлавĕн тытăмĕ эпидемипе тивĕçлипе кĕрешрĕ. Çапах та пандеми хальхи çивĕч ыйтусене те уçăмлатрĕ. Сăмахран, Чăваш Ен тĕп хулинче хальхи инфекци стационарĕ çитменнине.

Республика клиника больницин хальхи çурчĕн иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенчен пуçласа 80-мĕш çулĕсенче хута янă тĕрлĕ хуралтипе сооруженийĕсем кивелсе çитни. Çавна пула ку чухнехи медицина пулăшăвĕн стандарчĕсене тивĕçтерме, сиксе тухакан йывăрлăхсене васкавлăн сирсе пăрахма майсем çук.

Çапла. «Сывлăх сыхлавĕ» наци проектне пула эпир сывлăх сыхлавĕн объекчĕсене тăватпăр тата юсатпăр. 2020 çулта Хулари ача-пăча 2-мĕш больницин инфекцин çĕнĕ стационарĕ хута кайрĕ. 10 поликлиникăна çĕнетнĕ, Шупашкар хулинче тата Улатăр районĕнче 2 вертолет площадкине йĕркеленĕ. Çакă чăннипех лайăх пулăм! Халĕ эпир йывăр чирлĕ пациентсене регионти центрсене чылай хăвăртрах илсе çитерме пултаратпăр.

Владимир Путин Президент республикăри клиника больницин инфекци блокĕллĕ медицинăн нумай ĕç-хĕллĕ çĕнĕ комплексне тăвассипе çыхăннă пирĕн пуçарăва ырларĕ. Чăваш Республикин Министрсен кабинечĕн тĕллевĕ – проект документчĕсене хатĕрлесе çитерсе килĕшӳллĕ тăвасси тата çак пысăк

пĕлтерĕшлĕ объекта 2021 çул вĕçĕнчен тата 2022 çул пуçламăшĕнчен кая юлмасăр тума тытăнасси.

Асăннă ыйту енĕпе малта пыракан Ростех, Тулашэкономбанк аталану институчĕсемпе çыхăнса ĕçлени Чăваш Ен халăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланакан çак объекта хăвăртрах туса хута яма тата чĕрепе юн тымарĕсен тытăмĕпе юн çаврăнăшĕн чирĕсемпе, çавăн пекех сывлав органĕсен чирĕсемпе чирлĕ çынсене пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕ памалли центрсем туса хума май парать. Çакă Чăваш Республикин Сывлăх сыхлав отраслĕн тата чирлĕ çынсен çивĕч ыйтăвĕсене татса памалли тĕп çул-йĕр.

Çавăн пекех пирĕн тумалли ĕçсен шутĕнче – Республикăри клиника онкологи диспансерĕн çĕнĕ корпусне тăвасси, унта производство комплексĕ тата реабилитаци уйрăмĕ вырнаçмалла.

Сывлăх сыхлавĕн малтанхи сыпăкне çĕнетесси те кăçалхи чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевсен шутне кĕрет: çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕсемпе врач подразделенийĕсем тумалла, сывлăх сыхлавĕн 36 объектне комплекслă майпа юсамалла.

Ял тăрăхне тимлĕх ытларах уйăрма тивет, унти сывлăх сыхлавĕн инфратытăмĕ, пысăк хуларисенчипе танлаштарсан, палăрмаллах кивелсе çитнĕ. 2021 çулта ку чухнехи компьютер томографийĕпе Улатăр районĕн – республикăри чи аякри районăн – тĕп больницине тивĕçтерме йышăннă. Кунта территорисем хушшинчи туллин ĕçлекен центр йĕркеленмелле.

Кăçалах Канаш тата Муркаш районĕсенче çĕнĕ пысăк поликлиникăсем тумалли проект докуменчĕсене хатĕрлесе çитермелле.

Асăннă ĕçсене пурнăçлани Чăваш Енре пурăнакансене малтанхи медицина пулăшăвĕпе те, пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕпе те усă курма пултармалли майсемпе тивĕçтермелле.

Тĕрлĕ сăлтава тата условие пула пурнăçра йывăр лару-тăрăва лекнĕ çынсене пулăшу парасси – пирĕн ĕçĕмĕрĕн пĕлтерĕшлĕ пайĕ. Социаллă политика – халăха сыхласа упрамалли тĕллеве пурнăçлама пулăшакан витĕмлĕ мелсенчен пĕри.

Пандеми сарӑлса пынӑ вӑхӑтра ҫӗршыв Президенчӗ ҫынсене тата ҫемьесене пулӑшу памалли халиччен пулман майсем ҫинчен калакан йышӑнусем турӗ. Вӗсемпе килӗшӳллӗн кӑна Чӑваш Енре пурӑнакансем пенси фондӗнчен 6 миллиард тенке яхӑн пулӑшу илнӗ.

Республика шайӗнче те йышӑнусем турӑмӑр, ҫавна май вӑйра тӑраканнисене сыхласа хӑварма кӑна мар, ҫӗнӗ пуҫарусемпе пулӑшу мерисене пурнӑҫлама май килчӗ:

- Чӑваш Республикин саккунӗпе пурӑнма кирлӗ чи пӗчӗк виҫе шайне чакармалла мар нормӑна ҫирӗплетнӗ;

- социаллӑ тӳлевсене тӳрех виҫӗ ҫулшӑн 9,4 процент чухлӗ индексациленӗ;

- республикӑри амӑшӗн капиталӗн виҫи пысӑкланнӑ;

- пӗрремӗш ача ҫуралсан паракан тӳлеве тата виҫҫӗмӗш ача ҫуралнӑ чухне кашни уйӑхра укҫа тӳлевӗ илекен ҫемьесен шучӗ пысӑкланнӑ;

- 16 пине яхӑн ачана шкула хатӗрлеме пуҫласа 5 000 тенкӗ виҫепе тӳлев памалла тунӑ.

Нумай ачаллӑ ҫемьесене, вӗсен шучӗ республикӑра 15 пин ытла, пулӑшасси ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхатпӑр.

2021 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 5 тата ытларах ачаллӑ ҫемьесенчи ачасем валли уйӑхсерен паракан пособисене пысӑклатнӑ виҫепе тӳлеҫҫӗ тата ашшӗ-амӑшӗнчен пӗрне транспорт налукӗ тӳлес енӗпе ҫӑмӑллӑх параҫҫӗ.

Вӑйра тӑракан мӗнпур пулӑшу майӗсене ҫулсерен индексацилеме хушатӑп. Ҫавӑн пекех Чӑваш Ен Ӗҫлев тата социаллӑ хӳтлӗх министерствин патшалӑх тата муниципалитет влаҫӗн интересленекен органӗсемпе пӗрле пулӑшу памалли майсем ҫынсен социаллӑ хӑй туйӑмлӑхӗ ҫине мӗнлерех витӗм кӳнине тӑтӑшах асӑрхаса тӑмалла тата вӑхӑтра тӳрлетӳсем кӗртмелле. Пулӑшу памалли мерӑсемпе вӗсене илекен ҫынсемпе ҫемьесене Президент палӑртнӑ тӗллевсенчи тивӗҫтерӳ шайӗнче тивӗҫтермелле.

Сӑмахран, пӗлтӗр эпир пилот регион шучӗпе Раҫҫей Ӗҫлев министерствин социаллӑ контракт мелӗпе усӑ курса чухӑнлӑха чакармалли проект-

не пурнăçлама хутшăнтăмăр. Пурнăç асăннă меслетĕн витĕмлĕхне тата унăн малашлăхĕ пуррине кăтартса пачĕ.

5 пин ытла контракт тунă, 19 пин çын ытла хăйĕн тупăшĕн шайне ӳстернĕ. Социаллă контрактсем тăвас ĕçе кăçал та малалла тăсатпăр, мĕншĕн тесен унпа çĕршывĕпех усă кураççĕ.

Тĕллевлĕ индикатор – 2025 çул тĕлне республикăри чухăнлăх шайĕн кăтартăвĕ (паянхи 17 процент) сахалтан та 14,3 процент таран чакмалла.

Сывă пурнăç йĕрки вăл – сывлăхшăн тăрăшни те, сиенлĕ йăласенчен асăрхаттармалли лайăх мел те. Массăллă спортпа физкультурăна аталантарас ĕç вара пысăк çитĕнӳсен спорчĕн никĕсне хывать. Çавăнпа та пĕлтĕр спорт инфратытăмне аталантарас тата унăн малашлăхлă çул-йĕрĕсене пулăшас тĕлĕшпе пурнăçланă ĕçсене малалла тăсмалла.

Пĕлтĕр Шупашкар хулинче хоккей енĕпе Регион центрне тата Элĕк салинче ишмелли 25 метрлă бассейн туса пĕтернĕ.

Шупашкарта пĕрремĕш пĕрлехи шкул стадионне туса лартнă, вăл физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли усă комплекс евĕр ĕçлет.

Çавăн пек тата 2 стадиона Патăрьелпе Çĕрпӳ районĕсенче тумалла.

Кăçалах республикăн тĕп хулинче эпир тахçантанпах кĕтекен тата çав ĕçе пурнăçлассишĕн нумай тăрăшнă «Атăл» стадиона юсаса çĕнетес ĕç пуçланмалла.

Олимп резервĕн шкулĕ валли 50 метр тăршшĕ бассейн тумалли проектпа смета докуменчĕсене хатĕрлесе çитермелле, эпир кивĕ çурта юрăхсăра тухнăран хупрăмăр.

Çавăн пекех 2022 çулта тумалли ĕçсен планĕнче – Çĕнĕ хулара тăррине витнĕ футбол манежĕ тата витнĕ пăр катокĕ тăвасси.

Асăннă объектсем Чăваш Енре пурăнакансемшĕн спортпа физкультура инфратытăмĕпе усă курмалли майсене палăрмаллах лайăхлатаççĕ, шкул спорчĕн лигине аталантарма майсем хываççĕ, ăна эпир Ирина Роднинапа пĕрле йĕркелетпĕр.

«Кĕмĕл çулсенчи» çынсем валли тӳлевсĕр спорт занятийĕсем ирттересси çинчен калакан йышăну хăйĕн тухăçлăхне кăтартса пачĕ. Пĕлтĕрхи çурла

уйăхĕнчен тытăнса аслă çулсенчи спорт тусĕсен шучĕ 20 процент чухлĕ ӳсрĕ. Çакă мĕнпур ӳсĕмри ушкăнсен хушшинчи ӳсĕм хăвăртлăхĕн чи пысăк кăтартăвĕ.

Çавăн пекех спортра пысăк çитĕнӳсем тунă тата çĕршывăн пĕрлештернĕ командине кĕнĕ спортсменсене стипендисем парса пулăшасси çинчен калакан йышăнусене пурнăçа кĕртнĕ.

Олимп вăййисен чемпионĕсем тата призерĕсем пулса тăнă пĕрлештернĕ Олимп командин членĕсене хавхалантармалли майсене, вĕсене тахçантанпах çĕнетмен, çĕнĕрен пăхса тухма хушатăп.

<u>Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен!</u>

Пĕлӳ хуть хăш саманара та ăнăçулăх никĕсĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл çынна пурнăçри улшăнусене шута илсе ăнăçуллă тата çаврăнăçуллă пулма пулăшать. Вĕренӳ тытăмĕ кашни ачана аталантарма, асăннă сфера ĕçченĕсен ăсталăхне ӳстерме, пурнăçăн мĕнпур енне наукăпа çыхăнтарса йĕркелеме пулăшакан майсемпе тивĕçтермелле. Çавна тăвас тесен пĕтĕм вĕренӳ тытăмне çĕнетмелле: унăн пурлăх пайне те, ăс-пурлăх тытăмне те. Тĕллев – вĕренӳ ĕçĕн юрăхлăхне, пахалăхне тата тухăçлăхне ӳстересси. Тепĕр пĕлтерĕшлĕ самант – çитĕнекен ăрăва воспитани парасси тата патриотизма ăса хывтарасси.

Кашни ачан талантне уçса парасси – вĕренӳ тытăмĕн тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри. «Эткер» центр тивĕçĕ – ачасен кăсăкланăвне тупса палăртасси тата вĕсен пултарулăхне туллин уçса парасси.

Пĕрремĕш çитĕнӳсем те пур – 5-мĕш гимназин 11-мĕш класĕнче вĕренекен Анна Гущина Раççейĕн пĕрлештернĕ командине экономика енĕпе пуçласа кĕме тивĕçнĕ тата олимпиада пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх бронза призерĕ пулса тăнă. Çак çитĕнĕве тума пулăшнă педагогсене тав тăватăп. Аннăпа, паллах, эпир пурте мухтанатпăр.

2021 çулта ял çĕрĕнче тата пĕчĕк хуласенче вырнаçнă шкулсенче шкул ачисене çут çанталăк пĕлĕвĕсемпе наука тата технологи çул-йĕрлĕ про-

граммăсене вĕрентме «Ӳсĕм вырăнĕн» 61 центрне уçма палăртнă. «Çамрăк профессионалсем» регион проекчĕн пĕлтерĕшлĕ кăтартăвĕ 2021 çулта Çĕнĕ Шупашкарта професси енĕпе маларах вĕрентсе хатĕрлекен центр туса хуни пулса тăмалла.

Хальхи вĕренӳ стандарчĕсем, паллах, хальхи вăхăтри условисем йĕркелеме ыйтаççĕ.

Шкулччĕнхи вĕренӳ ĕçĕнче çитес виçĕ çулта 3 çулччĕнхи пĕтĕм пепкене ача сачĕсенче вырăнпа тивĕçтерес тĕллев тăрать.

Пĕлтĕр 1380 вырăнлă 7 çĕнĕ ача сачĕ уçрăмăр. Кăçал 1760 вырăнлă тата тепĕр 9 ача сачĕ уçма палăртнă.

2020 çулта Шупашкар хулин «Çĕнĕ хула» микрорайонĕнче ФАОри чи пысăк 1600 вырăнлă шкул, çавăн пекех Куславкка районĕнчи Куснар ялĕнче 205 вырăнлă тепĕр шкул хута кайнă.

Кăçал Муркаш районĕнчи Кашмаш ялĕнче 108 вырăнлă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкула тата Патăрьел районĕнчи Шăнкăртанри 1-мĕш вăтам шкул çурчĕ çумне тĕксе тăвакан 120 вырăнлă çурта хута яма палăртнă.

Тепĕр çул Шупашкар хулин «Садовăй» микрорайонĕнче 1650 вырăнлă шкул тăвассине вĕçлеме палăртнă.

Çакна палăртса хăварас тетĕп: тӳрех 5 çĕнĕ шкул тума тытăнма хатĕрленсе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Вĕсене Шупашкарти «Университет» микрорайонĕнче (1500 вырăн), «Лента» микрорайонта (1100 вырăн), «Радужнăй» микрорайонта (850 вырăн), Кӳкеç поселокĕнче (825 вырăн) тата Çĕнĕ Шупашкар хулинче (1216 вырăн) хута яма палăртнă.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн тĕллевĕ – асăннă шкулсене кăçалах туса пĕтерессине тивĕçтересси. Çакна тума майсем пур.

Халь ĕçлекен вĕренӳ учрежденийĕсене тĕпрен юсассине тата çĕнетессине те пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тесе шутлатăп. Паянхи кун тĕлне вĕсенчен 250-шĕн кивелсе çитнин кăтартăвĕ 50 ытла процентпа танлашать. Ку объектсене тĕпрен юсас ĕçе çитес 5 çулта вĕçлеме хушатăп.

Пуçламăш классенче вĕренекен мĕнпур ачана тӳлевсĕр апатпа тивĕçтермелли программа, ăна пĕлтĕр пурнăçлама тытăннă, апатланăва йĕр-

келекен тытăм ĕçĕнче татса паман чылай ыйтăва усăмлатрĕ. Шкулсенче ачасене çитерекен апат пахалăхне ÿстерес тата вăл мĕнпур ÿсĕмри ачасемшĕн юрăхлă пулассине тивĕçтерес енĕпе эпир пысăк ĕç туса ирттертĕмĕр. Çавна май «çавра сĕтелсем» те, мастер-классем те йĕркеленĕ. Чи кирли – çак ĕçре Шупашкарти малта пыракан шкулсем муниципалитет шкулĕсене куратор пулса пулăшни.

Шкулсенче вĕри апат çитерессине йĕркелес енĕпе тытăмлăн пурнăçлакан ĕçе малалла тăсма хушатăп. Тата, паллах ĕнтĕ, кашни ачан тутлă тата йÿнĕ хакпа апатланма майсем пулмалла.

2021 çула эпир тăван чăваш чĕлхине сыхласа хăварас тата аталантарас енĕпе йышăннă усăмлă программăпа кĕтĕмĕр, унăн тĕллевĕ – тăван чăваш чĕлхин сумне çĕклесси, общество пурнăçĕнче унпа хастарлăн усă курма майсем туса парасси.

Чăваш Ен Вĕренÿ министерствин чăваш чĕлхипе тата литературипе çĕнĕ, хальхи вăхăтри учебник туса хатĕрлемелле, ăна республикăри мĕнпур вĕренÿ учрежденине тата библиотекăна кĕске вăхăтра çитермелле.

Иртнĕ çулхи чÿк уйăхĕн 26-мĕшĕнче эпир Чăваш тĕррин кунне пуçласа савăнăçлăн уявларăмăр. Чăваш Ен Культура тата Экономика аталанăвĕн министерствисен умĕнче çакăн пек тĕллев тăрать: 2021 çулта чăваш тĕррине республика бренчĕ пек сарас тата наци тĕррин шкулне чĕртсе тăратас енĕпе ĕçлемелле. Тен, чĕртсе тăратассипе мар, аталантарас енĕпе. Мĕншĕн тесен тĕрĕ пирĕн пурнăçра анлă сарăлнă, эпир унпа мухтанатпăр.

Чăваш автономи облаçĕ 100 çул тултарнине уявлама хатĕрленнĕ тапхăрта культура объекчĕсене тăвас тата юсас енĕпе пысăк ĕç туса ирттертĕмĕр. Çĕнĕ 3 ял клубĕ тунă, 270 яхăн культура учрежденине юсанă, культура еткерĕн 8 объектне юсаса çĕнетнĕ. 2021 çулта Чăваш патшалăх филармонине юсаса çĕнетессине вĕçлемелле тата ăна ĕçе кĕртмелле. Эпир паян сирĕнпе пухăннă театра та – Оперăпа балет театрне – халăх шухăшне шута илсе юсаса çĕнетес ĕçе пуçăнма тĕллев лартатăп.

Чăваш Ен Культура министерствине Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн 2025 çулчченхи аталану стратегине туса хатĕрлеме хушатăп.

Паян эпир культура учрежденийĕсене хастарлăн юсатпăр, çĕнететпĕр тата ял çĕрĕнче çĕнĕ клубсем тăватпăр. Анчах та юсанă культура çурчĕсенче ĕçлес текенсем çукки те тĕл пулать. Асăннă культура учрежденийĕсен ĕç графикĕ те ыйтусем çуратать.

Çав ыйтусене муниципалитет пĕрлĕхĕсенче пурăнакансем мана хăйсемпе тĕл пулнă чухне час-часах параççĕ.

Чăваш Ен Культура министерствине культура учрежденийĕсен ĕç-хĕлĕпе ĕç йĕркин пĕрлехи стандарчĕсене туса хатĕрлеме хушатăп, çав шутра вĕсене кадрсемпе тивĕçтерес ыйтусем енĕпе те.

Республикăри культура сферинчи вĕренӳ учрежденийĕсен, чăн малтанах Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчĕн ĕçне çав тĕллевсене пурнăçлассипе çыхăнтармалла.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Маларах каланисене пурнăçа кĕртме вăйлă, конкурентлă экономика кирлĕ. Пĕлтĕр эпир республикăн комплекслă аталанăвĕн пилĕк çуллăх программине сӳтсе явнă тата унăн никĕсĕ çинче Чăваш Республикин Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн 2035 çулччен стратегине туса хатĕрленĕ вăхăтра пур пек майсене тĕплĕн тишкертĕмĕр. Малашлăх çул-йĕрлĕ тĕрлĕ варианта пăхса тухрăмăр.

Предпринимательлĕх пуçарăвне аталантарма лайăх майсем туса пани пĕтĕмĕшле никĕсри услови пулса тăрать.

Экономика ĕç-хĕлĕн уйрăм условисемлĕ зонисене туса хурасси – витĕмлĕ çул-йĕрсенчен пĕри. Ку енĕпе пирĕн лайăх ĕç опычĕ те пур.

Çапла, «Канаш» социаллă пурнăçпа экономика мала иртсе аталанакан территорире паянхи куна 3 резидент ĕçлет, 120 ытла çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Шупашкар хулин индустри паркĕн 1 черетпе хута ямалли территорийĕнче 5 предприяти ĕçлет. Кăçал унта тата тепĕр 2 производство уçăлать. Çăмăллăхлă зонăсен вăй-хăвачĕ чылай пысăкрах пулни куç кĕрет. Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министерствине «Канаш» ТОСЭР территорийĕнче ĕç-хĕлĕн ирĕк панă тĕсĕсен шутне ӳстермелли çинчен калакан заявкăна пĕр-

ремĕш çур çул вĕçлениччен Раççей Экономика аталанăвĕн министерствине хатĕрлесе яма хушатăп. Çак ыйтăва татса пани пире тепĕр 14 çĕнĕ резидента, 7 ытла миллиард тенкĕлĕх инвестици явăçтарма, 1,5 пин çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркелеме май парать.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Уйрăм аталану программине пурнăçланă шайра патшалăх харпăрлăхĕнчи виçĕ тата патшалăхпа уйрăм çынсен ĕçтешлĕхĕн мелĕпе пилĕк технопарк тума палăртă. Унсăр пуçне эпир Çĕнĕ Шупашкар хулинче ТОСЭР йĕркелеме палăртнăччĕ. Федераци Правительствинчи ĕçтешсемпе ку тĕлĕшпе калаçса та килĕшнĕччĕ. Анчах та Раççей Федерацийĕнче çĕнĕ ТОСЭРсем тăвас ĕçе чарса лартас енĕпе çирĕплетнĕ йышăнусене пула пире Çĕнĕ Шупашкар хулин территорийĕнче, вăл та çăмăллăхлă зонăсен шутне кĕрет, йĕркелеме сĕнчĕç.

Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерствине документсен кирлĕ пакетне кĕске вăхăтра туса хатĕрлемелле тата вĕсене Раççей Федерацийĕн Правительствине пăхса тухма ярса пама хушатăп.

Пирĕн кĕске вăхăтра çакна татса памалла: е эпир Çĕнĕ Шупашкарта ТОСЭР тăвас ĕçе вĕçне çитеретпĕр е уйрăм экономика зонине тăвас çула суйласа илетпĕр. Республикăн инвестици илĕртӳлĕхне ӳстермелли ытти ыйтăва та татса памалла. Пĕлтĕр эпир инвестици тунăшăн налука чакармалли мелпе усă курмалли майсене анлăлатрăмăр, республика территорийĕнче вăрах вăхăтлăх инвестици проекчĕсене пурнăçланă чухне уйăрса паракан чи пысăк çăмăллăхсене пăхса хăвартăмăр.

Кăçал аталанăва укçа-тенкĕ хывнă чухне хӳтĕлессине тата пулăшу парассине шута илекен саккуна пурнăçланă шайра инвестици ĕç-хĕлне пулăшу памалли майсене ĕçе кĕртме тĕллев лартатăп.

Вак тата вăтам бизнесăн пĕлтерĕшне икĕ цифра уçăмлатать: ку вăл Чăваш Енри çак сегментра ĕçлекен халăхăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ тата республика бюджетне кĕрекен налуксен калăпăшĕн 30 ытла процентчĕ. Предприниматель хастарлăхне пулăшса пыни тата ăна аталанма майсем туса пани – Чăваш Ен экономикине кал-кал аталантармалли тата ăна диверсификацилемелли тĕп никĕс. Иртнĕ çул гаранти тата микрофинанс организацийĕсене са-

маях пысăк нухрат – 1,2 миллиард тенкĕ уйăрнă. Микрозайм тата поручительлĕх йĕркипе паракан укçа-тенкĕ пулăшăвĕпе пĕтĕмпе вак тата вăтам предпринимательлĕхĕн 450 субъекчĕ 1,8 миллиард тенкĕлĕх усă курнă.

Тĕллев лартатăп:

- бизнеса çăмăллăн пуçласа меллĕ тытса пырас, хăйсем тĕллĕн ĕçлекен граждансен ĕç-хĕлне пурнăçлама лайăх майсем туса парас ĕçе йĕркелемелле;

- республикăри инвестици аталанăвĕн пĕрлехи агентстви пек палăртакан бизнеса пулăшу паракан пĕрлехи институт туса хурас ĕçе вĕçлемелле.

Çак ĕç пулăшу паракан тата аталантаракан мĕнпур институт ĕç-хĕлне тачă çыхăнтарса тăмалла. Унăн тĕллевĕ бизнесăн кашни шухăшне ĕçе кĕртесси, унăн малашлăхне тишкересси, ăна пурнăçа кĕртнĕ чухне кашни тапхăртах кирлĕ пулăшупа тивĕçтерессi пулмалла.

Ĕçтешсем, инвестици лаптăкĕсен тĕп пайĕ (çакна шăп çапларах йышăнма сĕнетĕп) – 2 пин те 400 ытла предприяти – промышленноç комплексĕ пулса тăнине манма юрамасть. Ку вăл тиесе ăсатнă таваршăн илнĕ 240 миллиард ытла тенкĕ, 75 пин ытла ĕç вырăнĕ. Иртнĕ çул пандемие пула чылай предприяти йывăрлăх тӳсрĕ. Çавна пула çулталăк пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх промышленноç производствин индексĕ кăштах чакрĕ. Çапла, Раççейри вăтам кăтартуран чылай пĕчĕкрех шайра çакă, анчах лăпланса лармалли сăлтав мар ку. Пирĕн умра татах та пысăк хăвăртлăхпа аталанас тĕллев тăрать.

Лару-тăрăва тĕпрен улăштарма пултаракан темиçе çул-йĕр куратăп. Вĕсенчен пĕрне эпир пурте лайăх пĕлетпĕр – экономикăн тĕрлĕ секторĕнчи организацисен конкуренци пултарулăхне ӳстермелли тухăçлă мел шутланакан кластерсем йĕркелени. Çавнашкал пĕр тĕслĕхе эсир пурте лайăх пĕлетĕр – паян пирĕн электротехника кластерĕн предприятийĕсем федераци тата тĕнче пĕлтерĕшлĕ пысăк инфратытăм проекчĕсене таварпа тивĕçтерес ĕçре малти вырăнта тăраççĕ.

Çавнашкал майпах апат-çимĕç оборудованийĕ туса кăларакансен, алăк тăвакансен, КХК тирпейлекенсен, ял хуçалăх продукцийĕсене тирпейлекен

уйрăм енĕсен, трактор тăвакансен, çăмăл промышленноç, туризм кластерĕсем йĕркеленме пултараççĕ.

Кăрлач уйăхĕн 22-мĕшĕнче эпĕ алăк тата сĕтел-пукан фасачĕсем туса кăларакан предприятисен представителĕсемпе тĕл пултăм. Çак предприятисен пĕтĕмĕшле производство калăпăшĕ Раççей рынокĕн 10 процентĕнчен кая мар шайпа танлашать. Çав хушăрах вĕсем хальлĕхе уйрăмшарăн ĕçлеççĕ. Кашни хăй тĕллĕн. Кластерсене пĕрлешни вара тата та хăвăртрах аталанма, федераци бюджетĕнчен пулăшу илме май панă пулĕччĕ.

Предприятисен ĕçне ку енĕпе йĕркелесе пыраканĕ Кластер аталанăвĕн центрĕ пулма пултарать. Çак шухăша кăçал пĕрремĕш çур çулра «Манăн бизнес» центр никĕсĕ çинче пурнăçа кĕртме хушатăп.

Экспорт тĕллевлĕ продукцисем туса кăларасси тата вĕсене чикĕ леш енчи рынока ăсатасси – пирĕн кашни кунхи ĕçĕн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри. Продукцисем тулаш рынокра кирлĕ пулни вĕсем ыттисенчен конкурентлăрах пулнине кăтартать.

Тĕслĕхрен, ял хуçалăх продукцийĕн экспорчĕ ӳссе пыни савăнтарать: малтанхи çулпа танлаштарсан пĕрре виççемĕш пай чухлĕ. Халĕ ку кăтарту АПШ 36 миллион долларĕпе танлашать. Унăн географийĕ – тĕнчери 37 çĕршыв.

Республика агропромышленность комплексĕ, çĕршыври тата ФАОри вăтам кăтартусенчен малта пырса, производство калăпăшне çулсерен ӳстерет. 2020 çулта ял хуçăлăхĕнчи производство калăпăшĕн ӳсĕмĕ 105 процентпа танлашнă.

Паянхи тĕллев пирĕн кашни гектар тухăçлăхне ӳстересси, унран пысăк тухăç тата тупăш илессине тивĕçтересси пулса тăрать. Çак çул-йĕре аталантарма пире çĕр лаптăкĕ пысăках марри хистет. Хăш-пĕр организаци кашни гектартан 10–11 пин тенкĕлĕх ял хуçалăх продукцийĕ туса илет, çав вăхăтрах 400 пин таран тупăш илнĕ тĕслĕх те пур. Малалла аталанса пымалли вăйхăват пурри те куç кĕрет.

Тĕллевсене пурнăçламалли çул-йĕрсенчен пĕри – тарăннăн тирпейлессин калăпăшне ӳстересси. Эпир, иртнĕ çул пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх,

сĕтĕн пĕрре виççĕмĕш пайне, ашăн пĕрре тăваттăмĕш пайне чĕр тавар евĕр сутатпăр, пахча çимĕçе уйсенчен скупщиксене йӳнĕ хакпа парса яратпăр. Çав хушăрах республикăра паха опыт йĕркеленет, продукцие туса илнинчен пуçласа ăна тарăннăн тирпейлесе кăларакан производство сыпăкĕсем йĕркеллĕн ĕçлекен тĕслĕхсем те пур. Кăçалтан тытăнса эпир çĕнĕ пулăшу мелне ĕçе кĕртрĕмĕр. Ăна пурнăçлама 120 миллион тенкĕ пăхса хăвартăмăр. Ку вăл ял хуçалăх продукцине тарăннăн тирпейлемелли оборудовани туяннипе пулнă тăкаксен 30 процентне субсидилесси.

Çав хушăрах çакна палăртмалла: республикăри агропромышленноç производствин пĕтĕм сферине патшалăх пулăшăвĕ параççĕ. Сăмахран, пĕлтĕр ял хуçалăх техникине туяннипе пулакан тăкаксен пĕр пайне саплаштармалли виçене ӳстернĕ, эмбрион центрĕсем тунипе тата çĕнетнипе, тырра хатĕрлесе çитермелли хăватсем тунипе, комбикорм предприятийĕсем, цехсем тунипе тата вĕсем валли оборудовани туяннипе, сĕт паракан пысăках мар выльăх-чĕрлĕх комплексĕсем тунипе пулакан чăн тăкаксен пĕр пайне саплаштармалли мел вăя кĕнĕ. Кăçал çăнăх авăртакансене тата çăкăр пĕçерекенсене федераци пулăшăвĕ памалли икĕ çĕнĕ мел хута каять. Вĕсен нормативлă никĕсне туса çитернĕ ĕнтĕ. Кунта çакна палăртса хăварас тетĕп, эпир пĕлтĕрех асăннă рынокри лару-тăру çивĕчленнине туйса çакăр-булка продукцийĕн хакне ӳсме парас мар тесе çак отрасле пулăшу кӳтĕмĕр.

Хăйне евĕрлĕ продукци тĕсĕсем çинчен те манмалла мар. Чăваш Ен Раççейре хăмла туса илекен тĕп регион шутланать. Çавна май ăслăлăх никĕсĕ, хăмла сорчĕсем пур, хăмла туса илмелли техникăна хамăр çĕршывра туса кăлармалли тĕллевсен уйрăм пайне татса панă, патшалăх пулăшăвĕн мелĕсене çирĕплетнĕ. Хăмла туса илессине ял хуçалăх производствине аталантармалли тĕп çул-йĕр пек йышăнма хатĕр районсене çулталăк вĕçĕччен палăртса çитермелле.

Тата тепĕр тĕллев – çĕр улми ӳстерекен регион ятне тавăрасси. Управсем, тирпейлекен цехсем туни çак культурăна аталантарма çĕнĕ майсем уçать. Республикăна çĕр улми ӳстерекен регионăн çухатнă позицийĕсене тавăрма пулăшакан условисем йĕркеленнĕ. Çак çул-йĕре пурнăçламалли

курăмлă «çул карттине» туса хатĕрлеме тата ăна республикăн 2025 çулчченхи комплекслă аталанăвĕн планне кĕртме хушатăп.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Паллă ĕнтĕ, пĕтĕм ыйтăвах кадрсем татса параççĕ.

Кирек хăш саманара та, кирек хăш территорире те этем ăнăçулăхăн тĕп сыпăкĕ пулса тăрать. Ку е вăл ĕçе пахалăхлă, пуринчен те лайăх тума пултаракан çынсем – палăртнă тĕллевсем пурнăçланассин шанчăклă никĕсĕ.

Социаллă сферăпа экономикăна пысăк ăсталăхлă кадрсемпе тивĕçтересси – ведомствăсем хушшинчи ыйту кăна мар, бизнесăн, патшалăхăн тата ăслăлăхăн пĕтĕмĕшле ыйтăвĕ пулни те куç кĕрет. Шкулчченхи вĕренӳ ĕçĕнчен пуçласа аслă пĕлӳ илесси таранах стандартсемпе витерни. Кадрсене хатĕрлессине çеç мар, çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлес ĕçе те. Çав тытăм пулса иртекен улшăнусене шута илме пултартăр.

Ĕçсĕр граждансен регистрациленĕ шучĕ пĕлтĕрхи хăйĕн чи пысăк шайне çитнĕ вăхăтра çул пуçламăшĕнчипе танлаштарсан 7 хут ӳснĕ. Пирĕн кăçалхи тĕллев – ĕçпе тивĕçтернĕ çынсен шутне унччченхи шая тавăрасси.

Кадр ыйтăвне регионăн тĕллевлĕ заказĕпе усă курса татса пама пулать. Республикăри вузсемпе ссузсенчен паян кашни çул пĕтĕмĕшле 14 пинрен кая мар студент вĕренсе тухать пулин те, вĕренӳпе медицинăра та, производствăпа ял хуçалăхĕнче те, культурăра та, патшалăха тытса пырас ĕçре те кадрсем çитменнине куратпăр. Ыйту сиксе тухать: ĕçтешсем, кадрсене кам валли тата мĕн тĕллевпе хатĕрлетпĕр эпир?

Çак ыйтăва тишкерни питех те пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăп тата çапла тума хушатăп:

- 2025 çулччен тата 2030 çулччченхи малашлăхра професси кадрĕсем мĕн чухлĕ кирлĕ пулассине уçăмлăн палăртакан план туса хатĕрлеме;

- професси пĕлĕвĕ паракан организацисен вĕренӳ программисене çав планпа килĕшӳллĕн çĕнетме;

- республикăри шкулсенче ĕç рынокĕнчи малашлăхлă çул-йĕрсемпе профильлĕ классем уçас ĕçе туса ирттерме;

- экономикăра, социаллă сферăра кирлĕ специальноçсемпе тĕллевлĕ вĕрентме йышăнмалли план хатĕрлеме.

Професси кадрĕсене хатĕрлессипе çыхăннă лару-тăрăва çирĕппĕн тĕрĕслесе тăма тата республикăри предприятисемпе организацисене кадрсемпе тивĕçтерес ĕçре пулса иртекен улшăнусене вăхăтра асăрхаса тăма май паракан уçăмлă тата ăнланмалла документ çулталăк варри тĕлне хатĕр пулмалла тесе шутлатăп.

Татса памалли тепĕр витерекен тема вăл – пирĕн пурнăçри мĕнпур ĕçхĕле цифрăласси.

Пирĕн умра экономикăн тĕп отраслĕсене тата социаллă сферăна цифра мелĕ çине куçарас тĕллев тăрать. Аса илтеретĕп: Раççей Президенчĕ Владимир Владимирович Путин 2030 çулччenхи наци аталанăвĕн тĕллевне çавнашкал палăртнă. Çавна шута илсе Чăваш Республикине 2021–2023 çулсенче цифра мелĕпе тытса пырасси çине куçармалли стратегине туса хатĕрлемелле; ĕç тăвакан влаç органĕсен экономика отраслĕсемпе социаллă сферăна, çав шута сывлăх сыхлавĕпе вĕренĕве, çавăн пекех патшалăх управленине кĕртсе, цифра мелĕпе тытса пырасси çине куçассине йĕркелесе тăрас ĕçе тăтăшах туса пырассине тивĕçтермелле.

Çитес виçĕ çул хушшинчи тĕп тĕллев – патшалăх тата муниципалитет паракан социаллă пĕлтерĕшлĕ массăллă пулăшу ĕçĕсен реформине туса ирттересси. Чăн малтанах вĕсене электронлă мел çине куçарасси. Пирĕн тĕллев – регионта пурăнакансем нумай функциллĕ центрсен хуть хăш филиалĕнче те, вăл ăçта вырнаçнине тата пулăшу ыйтаканăн пропискине пăхмасăр, патшалăх кӳрекен пĕтĕм пулăшăва илме пултармалла тăвасси. Çакна тивĕçтерме эпир мĕнпур нумай ĕç-хĕллĕ центрсене централизацилес ĕçе пуçларăмăр, маларах асăннă майсем çапла вара çулталăк варринелле йĕркеленме пултарĕç.

Ĕç тăвакан влаç тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем умне çакăн пек тĕллев лартатăп: граждансем тăратакан документсен шутне чи пĕчĕк шая çити чакармалла. Ку тытăм çине куçасси майĕпен пулса пырĕ, çулсерен – патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕн 2-рен кая мар тĕсĕ.

2022 çул тĕлне патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕн 25 процентран кая мар шайне дистанци мелĕ çине куçарма хушатăп.

Кăçал граждансене пурнăçри ку е ытти лару-тăрура социаллă хӳтлĕх илме право пурри çинчен автоматизаци мелĕпе пĕлтерсе тăмалли технологие туллин пурнăçа кĕртмелле.

Цифра мелĕ çине куçнă чухне республикăн хăрушлăхсăр тытăмне йĕркелемелле. Çак тытăм пире лайăх майсем туса панипе пĕрлех хăрушлăх та кăларса тăратма пултарать. Чăваш Енĕн тĕп хулинче эпир «Хăрушлăхсăр хула» тытăмăн аппаратпа программа хатĕрĕсен комплексне çирĕплетсе лайăхлатрăмăр. Пирĕн тĕллев – хăрушсăрлăха республикăн пур кĕтесĕнче те ӳстересси.

Регионăн хăйĕн информаципе телекоммуникаци инфратытăмне йĕркелемелле тата даннăйсемпе ĕçлемелли пĕрлехи меслет хатĕрлесе çитермелле. Унсăр патшалăх ĕç-хĕлне тухăçлă пурнăçлама май çук.

Электронлă правительствăн инфратытăмне туса хурассине тата аталантарассине, информаци хăрушсăрлăхне тивĕçтерессине тата даннăйсене тытса пырассине республикăра пĕрлехи майсемпе тивĕçтерме хушатăп.

Маларах асăннă пулăшу ĕçĕсен тĕсĕсене аталантарнă май, вĕсемпе пысăк хăвăртлăхлă интернетсăр усă курма çуккине те асра тытмалла. Шел пулин те, Чăваш Республикинче хальлĕхе пахалăхлă интернет тата карас çыхăнăвĕ çук вырăнсем те нумай-ха.

Пирĕн çынсене Интернет вĕсем патне хăçан çитессине тата çавна май унпа çыхăннă пулăшу ĕçĕсемпе хăçан усă курма май пулассине уçăмлăн каламалла. Пирĕн çак тĕллеве çитес 2 çулта пурнăçламалла, республикăри мĕнпур çынна ăçта пурăннине пăхмасăр интернетпа тата карас çыхăнăвĕпе тивĕçтермелле.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Çĕршыв Президенчĕ Владимир Владимирович Путин хушнипе Чăваш Енре кăна мар, çĕршывĕпех Регион управленийĕн центрĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем тĕрлĕ проблемăна тишкереççĕ. Республикăра пурăнакансене

пӑшӑрхантаракан ҫивӗч ыйтусенчен пӗри, ҫакна ӑнланма та пулать, транспорт инфратытӗ. Кӑҫал ӑна аталантармалли тӗп ҫул-йӗрсем пассажирсене турттарас сферӑри ҫивӗч ыйтусене татса пани, ҫулсен пахалӑхӗпе хӑрушлӑхсӑрне ӳстерни, ҫавӑн пекех пассажирсене регионсем тата ҫӗршывсем хушшинче турттарас ӗҫе аталантарни пулса тӑраҫҫӗ.

Пирӗн ҫапла тумалла:

- кӑҫал пурнӑҫланма тытӑнакан федерацин «Хула агломерацийӗсенчи пассажир транспортне ҫӗнетесси» проектне республика хутшӑнассине тивӗҫтермелле;

- муниципалитетсем хушшинче ҫӳрекен обществӑлла транспортӑн маршрут сетьне республикӑри районсенче пурӑнакансен шухӑшне шута илсе йӗркелес ӗҫе вӗҫлемелле;

- Шупашкарпа Ҫӗнӗ Шупашкар хушшинче халӑха турттарас ӗҫ проблемине татса памалла. Халӑхра каланӑ пек, ыйтӑвӗ ку «вӗрен пек тӑсӑлакан-скер». Ӑна татса парас ӗҫре хальхи майсене шута илмелле. Урӑхла каласан, ҫителӗклӗ транспорт хатӗрне явӑҫтарасси енчен те, тӳлев системи тӗлӗшӗнчен те. Ҫын А пунктран Б пункта ҫӳревшӗн пӗр хутчен тӳлесех, пӗр транспортран теприн ҫине миҫе хутчен куҫса ларнине пӑхмасӑр, ҫитме пултармалла.

Автомобиль ҫулӗсене нормативлӑ шая ҫитермелли тӗллеве пурнӑҫлассине эпир малалла тӑсатпӑр. Шупашкарта Граждански урама юсаса ҫӗнетес ӗҫ пуҫланать – унти ҫул республика тӗп хулинчи ҫулсенчен чи проблемӑллисенчен пӗри. Транспортӑн виҫҫӗмӗш ҫурма ункине проектлас ӗҫе 2021 ҫулта вӗҫлеме тӗллев лартнӑ.

Эсир пӗлетӗр, ку ҫул-йӗре паян Президент ырланӑ, ӑна ҫитес вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртме пирӗн майсем пур. Регион сетӗнчи автоҫулсен хытӑ сийлӗ ҫулсӑр сыпӑкӗсене пӗтересси те пӗлтерӗшлӗ тӗллевсен шутӗнче. Ку ыйтӑва ытларах чухне муниципалитет пӗрлӗхӗсен чиккисенче пурӑнакансем хускатаҫҫӗ. Ҫак ӗҫе ҫитес виҫӗ ҫулта вӗҫлеме хушатӑп. Кӑҫал эпир Сӗнтӗрвӑррипе Куславкка районӗсем хушшинчи ҫула туса пӗтеретпӗр. Ҫитес ҫул Элӗк тата Хӗрлӗ Чутай районӗсем хушшинчи хытӑ сийлӗ ҫулсӑр сыпӑка пӗтерме палӑр-

татпăр. Маларах каланă пекех, пирĕн çак ĕçсене палăртнă вăхăтра пурнăçлассине йĕркелемелле. Çакă асăннă муниципалитет пĕрлĕхĕсем хушшинче çынсене хутшăнма лайăх майсем йĕркеленисĕр пуçне тепĕр пĕлтерĕшлĕ тĕллеве пурнăçлама та пулăшать. Республикăра медицина пулăшăвĕ памалли виçĕ шайлă тытăм аталаннине кура сывлăх сыхлавĕн территорисем хушшинчи учрежденийĕсем йĕркеленеççĕ, апла пулсан лайăх çулсем пулни вĕсемпе туллин усă курма тата унта чирлĕ çынсене вăхăтра илсе çитерме май парать.

Ялан асăнакан тепĕр объект – Етĕрне хули тавра иртекен автоçул строительстви. Çак объектра ăна чарса лартичченхи тапхăрта пурнăçланă ĕçсен калăпăшĕ 700 миллион тенкĕпе танлашнă. Автоçула ĕçе кĕртни Етĕрне хулипе иртекен транспорт юхăмне чакарма тата çул-йĕр хăрушсăрлăхне ӳстерме пулăшĕ. Кăçал Чăваш Ен Транспорт министерствин проекта тӳрлетӳсем кĕртессине вĕçлемелле тата Раççей Транспорт министерствипе пĕрле федераци бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрассипе çыхăннă ĕçе туса ирттермелле. Кун пек майсем пирĕн те пур. Малтанхи ĕçсене, ĕçтешсем, пурнăçланă. Çавна май Чăваш Ен Транспорт министерствине ку енĕпе çине тăрарах ĕçлеме хушатăп.

Çавăн пекех кăçалхи тĕллевсен шутĕнче – регионсем хушшинчи авиатурттару географине сарасси, аэропорта юсаса çĕнетме тытăнасси, троллейбус паркне çĕнетесси тата юхан шыв транспортне аталантарасси.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Экологири кăçалхи тĕп çул-йĕрсенчен пĕри – каяшсене тыткаламалли территори схемине туса пĕтересси. (Çакă ĕçе вĕçлессипе мар, паняхи кун тĕлне усă куракан схемăна тӳрлетӳсем кĕртессипе çыхăннă ахăртнех). Ăна çӳп-çап турттармалли çĕнетнĕ логистикăна, çут çанталăка сыхлас енĕпе йышăннă саккунсен требованийĕсене, хальхи çӳп-çап вырăнĕсем тулса çитнине шута илсе хатĕрлесе çитермелле.

Пĕлтĕр Елчĕк тата Элĕк салисенчи коммуналлă хытă каяшсен çӳп-çап вырăнĕсене йĕркене кĕртмелли ĕçсене вĕçленĕ. Кăçалхи тĕллев – Канаш хулинчи коммуналлă хытă каяшсен çӳп-çап вырăнне йĕркене кĕртесси, Çĕрпӳ тата Красноармейски районĕсен çӳп-çап вырăнĕсене хупасси. Эппин, вĕсене

каярахпа йĕркене кĕртмелли проектпа смета докуменчĕсене туса хатĕрлемелле.

Çав хушăрах, ĕçтешсем, чи малтан администраци пуçлăхĕсене тата Çут çанталăк министерствине чĕнсе калатăп: ирĕк паман çӳп-çап вырăнĕсене йĕркеленме памалла мар. Çак тĕллевпе Чăваш Ен Çут çанталăк министерствипе вăрман хуçалăхĕн муниципалитетăн влаç органĕсемпе çеç мар, обществăлла пĕрлешӳсемпе тата экологи ĕçĕнчи уйрăм активистсемпе çыхăнса ĕçлемелле.

Çӳп-çапа уйăрса пухас тата коммуналлă хытă каяшсене тирпейленин тӳпине ӳстерес ĕçсене, каяшсене тирпейлессин тата ĕçе кĕртессин хупă циклне йĕркелессине тивĕçтерес енĕпе хастар ĕçлесси те тĕп вырăнта тăрать.

Ĕçтешсем, паллă ĕнтĕ, çурт-йĕр строительствин калăпăшне ӳстересси стратегилле тĕллев пулса тăрать. Раççей аталанăвĕн 2030 çулчченхи наци тĕллевĕсене пурнăçланă шайра Владимир Владимирович Путин çакăн пек тĕллев лартнă – пурăнмалли çурт-йĕр строительствин калăпăшне Раççейĕпе çулталăкра пĕр çын пуçне 0,83 тăваткал метртан кая мар тивĕçтересси. Пĕлтĕр Чăваш Енре ку кăтарту пĕр çын пуçне 0,48 тăваткал метр лаптăкпа танлашнă.

Президент палăртна тĕллевсене пурнăçлама пирĕн мĕнпур кирлĕ ресурс пур. Çурт-йĕр строительствин калăпăшне ӳстернипе халăхăн пурнăç пахалăхĕ тӳрремĕнех çыхăннă. Унсăр пуçне, строительство ĕçĕ – экономикăна аталантармалли хăватлă драйверсенчен пĕри.

Паян Чăваш Енре пĕр çын пуçне 28 тăваткал метр тивĕçет. Çакă, ытти регионсемпе танлаштарсан, самай лайăх кăтарту. Анчах та пирĕн кунпа кăна лăпланса лармалла мар. Тĕллеве пурнăçланă май 2030 çул тĕлне пирĕн çак кăтартăва 31 тăваткал метртан кая мар шая, пĕр çын пуçне хута яракан çурт-йĕр калăпăшне вара 1 тăваткал метртан кая мар шая çитермелле.

Çакна тума Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн районсемпе хуласен пуçлăхĕсемпе пĕрле çурт-йĕре комплекслă майпа туса лартмалли участоксем йĕркелес тата эпир туса хатĕрленĕ çурт-йĕре комплекслă майпа туса

лартмалли участоксенче инженерипе транспорт инфратытăмĕ тăвас енĕпе хушма мерăсем йышăнмалла.

Çурт-йĕр строительствин калăпăшĕсене йĕркеллĕн ӳстерсе пымалли тата Чăваш Енĕн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн 2025 çулчченхи комплекслă программинче палăртса хăварнă тĕллевлĕ кăтартусене пурнăça кĕртмелли майсем йĕркелемелле.

Асăннă сферăри тепĕр пĕлтерĕшлĕ ыйту вăл – кивелнĕ тата ишĕлекен çуртсенчен çынсене урăх вырăна пурăнма куçарасси. Паянхи куна пирĕн 2025 çулччен 561 çынна ишĕлекен 23 çуртран урăх вырăна пурăнма куçармалла. Çакна программăра çав çуртсене 2017 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕччен ишĕлекен тесе йышăннине шута илсе çирĕплетнĕ. Асăннă кун хыççăн ишĕлекен шая çитнĕ тата 264 çурт пур-ха. Унта 4 пине яхăн çын пурăнать. Пирĕн çак ĕçе хăвăртлатма тăрăшмалла. Раççей Федерацийĕн Правительстви те çавнах калать. Республикăра çирĕплетнĕ программăна срокчен вĕçлес тата паянхи куна ишĕлекен тесе йышăннă юлнă пек çуртсене вăйра тăракан программăна май килнĕ таран ытларах кĕртес тесен пирĕн хамăртан килнине йăлтах тумалла. Паллах ĕнтĕ, çак тĕллеве татса пама ытти майсем те шырамалла.

Шел пулин те, пĕлтĕр эпир тăлăх ачасене тата халăхăн ытти категорийĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерме палăртса хунă укçа-тенкĕпе туллин усă курма май килмерĕ.

Сăлтавĕсем нумай, çав шутра объективлисем те. Эпир йăнăшсене тӳрлетме тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттертĕмĕр, уçăмлă мерăсем палăртрăмăр. Паян пирĕн çавнашкал фактсене пӳлме пĕтĕм майсем пур. Çавăнпа та Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕр коммуналлă хуçалăхĕн министерствине администрацисемпе пĕрле йĕркеллĕн тата ӳсĕмлĕн ĕçлеме хушатăп.

Республикăра пурăнакансене ĕçмелли паха шывпа тивĕçтересси – кун йĕркинчи çивĕч ыйту. Пĕлтĕр шывпа тивĕçтермелли 189 вырăна тĕпрен юсанă. Çапла майпа республикăра пурăнакан 22 пин çынна таса шывпа шанчăклă тытăм тивĕçтерет. Кăçалхи тĕллев – республикăн кăнтăр пайĕнчи темиçе пăрăхлă шыв çулĕн проектпа смета докуменчĕсене туса пĕтересси та-

та ҫав объектсене тума тытӑнасси. Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ пире ку енӗпе те пулӑшу пачӗ.

2020 ҫулта ялти ҫӑмӑллӑхлӑ ипотека мелӗ ӗҫлесе кайрӗ. Пирӗн йышӑнусемпе килӗшӳллӗн ставкӑсем ҫулталӑкне 0,1 процентран пуҫласа 3 процентпа танлашнӑ. Ку программӑна Чӑваш Енре пурӑнакансем, ҫав шутра ҫамрӑксем те, ырласа йышӑнчӗҫ – хӑйсен пурӑнмалли ҫурт-йӗр условийӗсене 750 ытла ҫемье лайӑхлатнӑ. 1 миллиард ытла тенкӗлӗх кредит уйӑрса панӑ. Анчах та эпир пурӑнмалли хатӗр ҫурт-йӗр ҫуккипе тӗл пултӑмӑр. Ҫавӑнпа та муниципалитет пӗрлӗхӗсен администрацийӗсене пурӑнмалли ҫурт-йӗр строительстви, ҫав шутра нумай ачаллӑ ҫемьесем, валли уйӑрса панӑ ҫӗрсене тишкерсе тухма, ял ҫӗрӗнче ҫурт-йӗр тумалли уҫӑмлӑ плансем туса хатӗрлеме хушатӑп.

Ял тата хула территорийӗсене аталантарасси – регион аталанӑвӗн тӗп тӗллевӗсенчен пӗри. Пӗлтӗр ял ҫӗрӗнче 3000 ытла проект пурнӑҫланӑ. Вӗсенчен чылайӑшне ӗҫе кӗртме Чӑваш Енре пурӑнакансем хӑйсем те хутшӑнаҫҫӗ. Ҫакна тума чӑн малтанах пуҫаруллӑ бюджетировани мелӗ май парать. Унсӑр пуҫне эпир Чӑваш Республики 100 ҫул тултарнине уявланӑ шайра 300 миллион тенкӗ уйӑрса парасси ҫинчен калакан йышӑну турӑмӑр, ҫавна май халӑх пурӑнакан кашни вырӑн общество пӗлтерӗшлӗ проектсене пурнӑҫлама ҫав укҫа-тенкӗне илчӗ. Пуҫаруллӑ бюджетиорвани проекчӗсене малашне те пулӑшса пырӑпӑр, мӗншӗн тесен ҫынсем хӑйсен укҫине пӗрлехи ӗҫе хываҫҫӗ, ҫавӑн пек проектсен ку е вӑл ҫул-йӗрне пурнӑҫлама хутшӑнаҫҫӗ пулсан, патшалӑх та унта хутшӑнма тата пулӑшма тивӗҫ.

Ял территорийӗсем валли комплекслӑ майпа тирпей-илем кӗртекен пӗрлехи инфратытӑм стандартне туса хатӗрлемелле. Ҫак ӗҫе кӑҫалхи утӑ уйӑхӗн 1-мӗшӗччен туса пӗтерме хушатӑп.

Палӑртса калатӑп – республикӑри кашни муниципалитетах инвесторшӑн кӑсӑк пулма пултарать тата пулма тивӗҫ те. Районсен инвестици паспорчӗсене йӗркелес ӗҫе вӗҫлени пӗлтерӗшлӗ. Ҫак ӗҫе кӑҫалхи пӗрремӗш ҫур ҫулта вӗҫлеме палӑртатпӑр, пирӗн хамӑрӑн инвестици порталӗ пулмалла, унта кирек хӑш инвестор та «онлайн» йӗркипе тата дистанци мелӗпе хуть хӑш

муниципалитет пĕрлĕхĕн вăй-хăвачĕпе паллашма тата ку е вăл бизнес проектне аталантармалли территорисене суйласа илме пултартăр.

Муниципалитет пĕрлĕхĕсен хăтлă хутлăхне аталантарма килсе çӳремелли туризма аталантарни пулăшмалла. Республика сăн-сăпатне илĕртӳллĕрех тăвассипе çыхăннă çак ĕç паян Етĕрне, Сĕнтĕрвăррин, Куславкка тата Улатăр хулисенче пырать, Шупашкарта туризм инфратытăмне аталантарас енĕпе анлă проектсем пурнăçланаççĕ. Туризм муниципалитетсене тупăш илме май паракан çул-йĕр пулса тăма пултарать, мĕншĕн тесен хăйĕнпе пĕрле ытти отрасльсене те аталанма пулăшать. Çĕнĕ программăсемпе маршрутсене ăнăçлăн аталантарма, республикăри пулăмсене Раççейре тата ют çĕршывсенче тивĕçлĕн кăтартма май паракан наци туризм брендне туса хатĕрлеме тĕллев лартатăп.

Ытти муниципалитетсемшĕн Шупашкар агломерацийĕ тĕслĕх пулса тăмалла. Кунта нумай пысăк объекта ĕçе кĕртнĕ, Раççейри тата тĕнчери малта пыракан тĕслĕхсемпе усă курса тивĕçлĕ опыт пухнă.

Ял территорийĕсене комплекслăн аталантармалли программăна хутшăнма 2021 çулта кашни муниципалитетăн заявка памалла, кирлĕ документсемпе тата патшалăх экспертизипе тивĕçтернĕ хатĕр проект тăратмалла. Шел пулин те, эпир ку ĕçе тивĕçлипе пурнăçлаймарăмăр, халĕ пирĕн ăна татса пама майсем те, вăхăт та пур.

Ытларах чухне ял поселенийĕсен хăйсене шанса панă полномочисене пурнăçлама укçи-тенки çитменни паллă. Эпир пĕлтĕр ку çивĕч ыйтăва татса парас енĕпе ĕçлеме тытăнтăмăр. Вырăнти бюджетсене уйăрса паракан бюджетсем хушшинчи трансфертсен калăпăшне 9 процент ытла ӳстертĕмĕр. Çав хушăрах тепĕр проблема пурри палăрчĕ – муниципалитетсен тĕрĕслевпе шутлав органĕсен ĕç тухăççăрлăхĕ. Шел пулин те, эпир муниципалитет программисем тăрăх тăкаклакан тата муниципалитетсене хамăр уйăрса паракан укçа-тенкĕн тухăçлăхне хак пама пултараймастпăр.

Çавăнпа та Финанс министерствине Тĕрĕслевпе шутлав палатипе пĕрле муниципалитет пĕрлĕхĕсен тĕрĕслевпе шутлав органĕсен тухăçлăхне ӳстер-

мелли майсем палăртма, çав шутра асăннă ĕç-хĕле централизацилеме хушатăп.

Патшалăх пурлăхне тытса пымалли тата унпа хуçаланмалли майсен тухăçлăхне те ӳстермелле. Усă курман е тухăçсăр усă куракан пурлăха тупса палăртас шутпа тĕплĕ тишкерӳ тума хушатăп. Патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕн çĕрпе пурлăх комплексне шута илмелли тата тытса пымалли Пĕрлехи информаци тытăмне ĕçе кĕртме сĕнетĕп. Çак ĕçе 2021 çул вĕçлениччен туса пĕтерме палăртнă.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Маларах эпĕ республика правительствин 2021 çулхи тĕп тĕллевĕсене палăртрăм. Вĕсене республикăра пурăнакансене общество тĕрĕслевне хутшăнтармасăр татса пама, тухăçлă пурнăçлама май çук. 2020 çулта общество канашĕсене палăрмаллах çĕнетнĕ – вĕсене конкурс мелĕпе йĕркелеççĕ. Çакна Чăваш Республикин общество палати çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртнипе тума май килчĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн общество палати ĕç тăвакан тата муниципалитет влаçĕсен органĕсен общество Канашĕсен йышне конкурс мелĕпе палăртать, вĕсен ĕç-хĕлне йĕркелесе пырать. Общество палати йĕркеленĕ площадкăсенче халăха, нумай ачаллă çемьесене, сывлăх сыхлавне, вак тата вăтам бизнеса, коммерциллĕ мар сектор организацийĕсене социаллă пулăшу парас ыйтусем енĕпе пуçарусем туса хатĕрленĕ. Çавна май тунă йышăнусене пурнăçланине общество енчен тĕрĕслесе тăрассине тивĕçтерес ĕçре те палатăн пĕлтерĕшне ӳстермелле.

Коммерциллĕ мар организацисен республикăра пурăнакансем çĕклекен çивĕч ыйтусене татса парас ĕçри пĕлтерĕшĕ те ӳсет. Паян коммерциллĕ мар организацисем граждансен хӳтлĕхсĕр ушкăнĕсене пулăшу парас ĕçри ыйтусене, спорт, культура, вĕренӳ тата ытти сферăна аталантармалли ыйтусене татса пама хутшăнаççĕ. Çак ĕçе, эпир, паллах, хавхалантарăпăр. Социаллă пуçарусене пулăшу паракан, вĕсене ĕçе кĕртме тата малалла аталантарма пулăшакан пĕрлехи центр туса хурмалла тесе шутлатăп. Çавăн пек центра кăçалах хута яма тивĕçлĕ тĕллев лартатăп.

Хисеплӗ ӗҫтешсем!

Кӑҫалхи авӑн уйӑхӗн 19-мӗшӗнче республикӑра тата ҫӗршывра суйлавсем иртеҫҫӗ. Эпир Раҫҫей Федерацийӗн Патшалӑх Думин депутачӗсене тата Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗсене суйлӑпӑр. Пирӗн пӗрлехи тӗллев – суйлав уҫӑмлӑхӗпе демократилӗхне тивӗҫтересси. Суйлавсене информаци уҫҫӑнлӑхне, уҫӑлӑха тата, паллах, конкурентлӑха тивӗҫтермелли мӗнпур йӗркене пӑхӑнсаирттермелле.

Пирӗн тӗллев мӗнпур суйлав комиссине видеосӑнав системисемпе тивӗҫтересси тата сасӑлав мӗнлерех иртнине тата сасӑсен шутлавне онлайн-трансляцийӗсемпе май килнӗ таран ытларах тивӗҫтерме майсем шырасси пулса тӑрать.

Пӗлтӗрхи суйлав кампанийӗ вӑхӑтӗнче хӑйӗн тухӑҫлӑхне кӑтартса панӑ Пӗрлехи информаци центрне хута ямалла.

Республикӑра сасӑлав мӗнле иртнине асӑрхаса тӑма Чӑваш Республикин Общество палатин пуҫарӑвӗпе йӗркеленӗ обществӑлла сӑнав штабӗн опычӗпе усӑ курмалла тесе шутлатӑп. Унӑн ӗҫӗ кӑҫал та суйлавсен уҫӑлӑхӗпе конкурентлӑхне тивӗҫтерме пулӑшӗ.

Хисеплӗ ӗҫтешсем!

Чӑваш Республикинче 2021 ҫула Сӑр тата Хусан хӳтӗлев чиккисене тума хутшӑннисен ӗҫри паттӑрлӑхне халалланӑ ҫулталӑк тесе пӗлтернӗ.

Палӑртнӑ пӗтӗм мероприятие ҫӳллӗ шайра йӗркелесе ирттермелле.

Пӗлтӗр Чӑваш Республикин «Вӑрҫӑ ачисем ҫинчен» саккунне йышӑнтӑмӑр. Вӑрҫӑ ҫулӗсенчи йывӑрлӑхсене чӑтса иртернӗ 70 пин ытла ватӑ халӗ укҫа-тенкӗпе ҫыхӑнман хушма ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курма пултарать. Саккуна йышӑннӑ чухне эпир ҫак ушкӑнри ҫынсене пулӑшу памалли майсене каярах хушса пыма калаҫса татӑлнӑччӗ. Правительствӑна «вӑрҫӑ ачисем» статуслӑ ҫынсене пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ пулӑшу ӗҫӗсемшӗн тӳлекен тӳлеве саплаштармалли меле хатӗрлесе ҫитерсе ӗҫе кӗртме хушатӑп. Ҫак мерӑна Чӑваш Республикин бюджетне пӗрремӗш тӳрлетӳсем кӗртнӗ чухнех право тата финанс тӗлӗшӗнчен тивӗҫтермелле.

Раççей Федерацийĕн Культура министерстви хушнипе Çарпа истори обществи Куславкка районĕнче Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене тума хутшăннисен асăну мемориалне тăвать.

Хисеплĕ ĕçтешсем, эсир ирĕк панипе, Куснар салинче пурăнакан Александрпа Людмила Прохоровсен çемйине, Ольга Плотниковăна, Николай Пантелеева тата Александр Кудряшова тепĕр хут тав тăватăп, вĕсем хăйсен çĕрĕсене асăну комплексне тума тӳлевсĕр панă. Асăннă мемориал Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче тылра ĕçленĕ мĕнпур çынна халалланă пĕрремĕш пысăк палăк пулса тăмалла.

Анчах та пирĕн кунпа кăна лăпланса лармалла мар. Пирĕн тĕллев – çак чăваш тата совет халăхĕн кун-çулĕнчи ĕç мухтавĕпе паттăрлăхĕн паллă тапхăрĕ истори учебникĕсене кĕрсе юлтăр тесе хамăртан килнине пĕтĕмпех тăвасси.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Çырура асăннă тĕллевсем республика аталанăвĕн мĕнпур тĕп çул-йĕрне пырса тивеççĕ. Чи кирли – вĕсем конкретлă тата вĕсене пурнăçлани тивĕçлĕ кăтартусем кӳрет. Çавăн пекех тата эпир пӳлĕмсенче ларса хамăр шухăшласа кăларман, Чăваш Енре пурăнакансем хăйсен çырăвĕсенче палăртнă чи çивĕч ыйтусене татса пама е татса парассине çывхартма май парать.

Çав ыйтусем тата пысăк та анлă. Вĕсене татса парасси, пахалăхĕпе содержанийĕ çав пĕлтерĕшлĕ ĕçсене пурнăçлама Чăваш Республикинчи кашни çынах хутшăннинчен, пирĕнтен кашниех хăйĕн ĕçне пĕтĕм вăйне хурса тата чунне парса пурнăçланинчен килет. Кунта мĕнле ĕç пулни те мар, унăн кăтартăвĕ пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен унăн ĕç кăтартăвĕсем пĕрлехи тĕллеве пурнăçлама пулăшаççĕ.

Çапăçура пĕччен çĕнтереймĕн. 1941 çулта пирĕн асаннесемпе асаттесем, кукамайсемпе кукаçисем, хĕрарăмсемпе çамрăк ачасем хăйсене хĕрхенмесĕр ĕçленĕ, пирĕн шутпа, май çуккине те тума пултарнă.

Хальхи условисенче, мăн асатте-асаннесен чун хавалĕ çине таянса, вĕсен паттăрлăхĕпе хавхаланса, кашни хăйĕн вырăнĕнче кирлĕ пулнине ăнланса, эпир тепĕр чухне хамăр шухăшланинчен те ытларах тума пултаратпăр.

Хисеплĕ ĕçтешсем, итленĕшĕн тав тăватăп.